28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
12
ВЫРСАРНИКУН
245(6482) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ҪӖНӖ ҪУЛ УМӖН

1943-мӗш ҫул вӗҫленсе пырать. Кӑҫалхи ҫул пирӗн тӑван ҫӗршывӑн историне паллӑ ҫӗнтерӳсен ҫулталӑкӗ пулса кӗрсе юлать. Верховный Главнокомандующи, Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ ертсе пынипе мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар, историллӗ чаплӑ ҫӗнтерӳсем туса, хӑйӗн иксӗлми вӑйне пӗтӗм тӗнче умӗнче кӑтартса пачӗ. Ленин—Сталин партийӗ тавра пӗрӗҫнӗ Совет Союзӗнчи халӑхсем ҫӗнтерӳ тӑвас сехете ҫывхартассишӗн вӑй-хӑвата шеллемесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ 1944-мӗш ҫул ҫывхарнӑ май Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем—фронтра, промышленноҫра транспорт работникӗсем, колхозниксемпе колхозницӑсем тата совет интеллигенцийӗ — тылра ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем туни ҫинчен калакан хыпарсем килсе тӑраҫҫӗ.

Промышленноҫӑн пур отраҫлӗсенче те ҫулталӑкри производство планӗсене срокчен пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешӳ сарӑлса пырать. Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн пархатарлӑ ҫитӗнӗвӗсене пур ҫӗрте те йышлӑн курӑтпӑр. Республикӑри предприятисен коллективӗсенчен нумайӑшӗсем, Мускаври «Динамо» завод коллективӗ чӗнсе каланине ответлесе тата Хӗрлӗ Ҫар совет хулисене ирӗке кӑларнипе хавхаланса, хӑйсем илнӗ обязательствӑсене срокчен пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ. Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен завод коллективӗ ҫулталӑкри плана ноябрӗн 27-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ. Вӑл завод коллективӗ Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне ултӑмӗш уйӑх ӗнтӗ хӑйӗн аллинче тытса тӑрать. Улатӑр хулинчи предприятисенчен саккӑршӗ хӑйсен ҫулталӑкри планӗсене Сталинла Конституци кунӗ тӗлне тултарнӑ. Канаш хулинчи предприятисем те чылайӑшӗсем хӑйсен планӗсене срокчен пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Ҫулталӑкри производство планне срокчен тултаракан предприятисемпе промысла коопераци артелӗсен йышӗ кунсерен ӳссе пырать.

Халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ рабочи класӑн чаплӑ ӗҫӗсене тивӗҫлипе хаклать. «Халӗ ӗнтӗ,—терӗ Сталин юлташ Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци 26 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладра,—танксен, минометсен, автоматсен хисепӗ енӗпе тӑшман малта тӑнине пӗтерсе хунӑ пулсан, пирӗн ҫар халӗ хӗҫпӑшалсем, боеприпассем, снаряжени енӗпе пысӑк ҫитменлӗхсемех туймасть пулсан, ҫакӑнта вара, пуринчен малтан, пирӗн рабочи класӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫне палӑртмалла».

Фронтпа ҫӗршыва ялхуҫалӑх продукчӗсем парас тӗлӗшпе колхоз хресченӗсем хӑйсен патриотизмлӑ пысӑк вӑйне кӑтартса пачӗҫ. Колхоз хресченӗсем кӑҫал тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗҫ, государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен пурнӑҫа кӗртрӗҫ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана та иртерсе тултарнӑ. Пирӗн республикӑна кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи ӑнӑҫусемшӗн Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме кандидата тӑратнӑ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне патриотла ҫӗкленӳпе пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Государство умӗнчи обязательствӑсене тултарнӑ хыҫҫӑн вӗсем хуҫалӑхра перекетленӗ тырра 2,5 миллион пӑт ытла государствӑна сутрӗҫ. Халӗ вӗсем ҫитес ҫулта татах та тухӑҫлӑрах тырпул туса илессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешеҫҫӗ. Колхоз хресченӗсен патриотизмӗ Хӗрлӗ Ҫара апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа чӗртавар ҫителӗкӗ парса тӑма майсем туса пачӗ.

Фронта пулӑшас ӗҫре совет интеллигенцийӗ те чаплӑ ӗҫсем тӑвать. Вӑл промышленноҫпа ялхуҫалӑх ӗҫне малалла ҫӗклес тӗлӗшпе рабочисемпе колхозниксене пулӑшать, ҫӗршыв хӑватне ӳстерессишӗн вӑя шеллемесӗр ӗҫлет.

Совет халӑхӗ ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартас тесе чаплӑ ӗҫсем турӗ. «Халӑх пулӑшман пулсан, — терӗ Сталин юлташ, — совет ҫыннисем фабрикӑсемпе заводсенче, шахтӑсемпе рудниксенче, транспортпа ялхуҫалӑхӗнче вӑя шеллемесӗр ӗҫлемен пулсан, Хӗрлӗ Ҫар ӳсӗмсем тума пултарайман пулӗччӗ. Совет халӑхӗ вӑрҫӑн йывӑр условийӗсенче хӑйӗн ҫарне мӗн кирлине йӑлтах пама пултарчӗ тата унӑн вӑрҫӑ техникине ывӑнма пӗлмесӗр лайӑхлатса пычӗ».

Ҫӗнтерӳ ҫывӑх ӗнтӗ. Союзлӑ виҫӗ державӑн руководителӗсен конференцийӗ йышӑннӑ Деклараци пӗтӗм тӗнчене ҫӗнтерӳ ҫывӑххи ҫинчен пӗлтерет. Совет халӑхӗ ҫав хыпара тулли кӑмӑлпа ырласа йышӑнчӗ. Анчах та ҫӗнтерӳ тӑвас сехете ҫывхартас тесен, ҫӗнӗрен ытларах вӑй хурса ӗҫлени, Хӗрлӗ Ҫара ытларах та ытларах пулӑшса тӑни кирлӗ. Совет ӗҫҫыннийӗсем умӗнче тӑракан паянхи хӗрӳллӗ задача—вӑл хуҫалӑх ҫулне лайӑх вӗҫлесе, ҫӗнӗ ҫулта татах та тухӑҫлӑнрах ӗҫлеме условисем хатӗрлесси пулать. Ҫӗнӗ ҫулччен 20 кун юлчӗ. Вӑрҫӑ тапхӑрӗнче 20 кун сахал мар вӑхӑт. Ӗҫе большевикла организацилесен ҫак кунсенче нумай ӗҫсене пурнӑҫа кӗртме пулать, кӗртмелле те.

Промышленность предприятийӗсен руководителӗсем, партипе профсоюз организацийӗсем ҫулталӑкри плансене кашни предприяти, промысла артелӗ, мастерской тӑрӑх ӑнӑҫлӑн тултарассишӗн мӗн пур вӑя кӗрешӗве мобилизацилеме тивӗҫлӗ. Планран иртерсе продукци ытларах кӑларассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пымалла. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче промышленноҫа ҫамрӑксемпе хӗрарӑмсем нумай хутшӑнчӗҫ. Вӗсене ӗҫ техникине вӗренме пулӑшмалла, тухӑҫлӑ ӗҫлеме условисем туса памалла. Ӗҫӗн ҫӗнӗ меточӗсене анлӑн сарса пырас пулать.

Чугун ҫул работникӗсемшӗн ответлӑ вӑхӑт—хӗллехи тапхӑр пуҫланчӗ. Халӗ ӗнтӗ чугун ҫул ҫинчи кашни работникӗн уйрӑмӑнах пысӑк тимлӗхпе ӗҫлемелле. Вӗсен хӗллехи йывӑр условисене ҫӗнтерсе, фронтпа ҫӗршыв ыйтнисене вӑхӑтра та тӗрӗс тивӗҫтерсе пымалла.

Колхоз хресченӗсем умӗнче пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Паян тумалли ӗҫ —вӑл государствӑна сутнӑ тырра декабрӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр хатӗрлев пункчӗсене леҫесси тата тырӑ сутас ӗҫе малашне те тимлӗн организацилесе пырасси пулать. Ҫавӑнпа пӗрлех ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлемелле.

Партипе совет организацийӗсен, ытти ӗҫсемпе пӗрлех, вӑрман хатӗрлемелли тата укҫа-тенкӗ пухмалли плансене тултарасси ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

Ҫӗнӗ ҫула хуҫалӑх планӗсене ӑнӑҫлӑн тата иртерсе пурнӑҫа кӗртнипе, фронтра та, тылра та ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе кӗтсе илер!

ГОСУДАРСТВӐНА—ТЫРӐ

Етӗрне районӗ государствӑна 94 пин пӑт тырӑ сутрӗ

ЕТӖРНЕ, декабрӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Кӑҫал пирӗн районри колхозсем тухӑҫла тырпул туса илсе, государство умӗнчи обязательствӑсене чыслӑн та срокчен парса татрӗҫ.

Сталин юлташ Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци 26 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ хӑйӗн докладӗнче колхозниксемпе колхозницӑсен тылри пархатарлӑ ӗҫне пысӑка хурса хакларӗ. Ҫулпуҫӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума чӗнекен сӑмахӗсене кашни колхозник чӗрене хыврӗ, ялхуҫалӑхӗнче ҫӗнӗрен паха ҫӗнтерӳсем туса ӗҫлеме хавхаланчӗ, фронтпа тӑван ҫӗршыва пулӑшас ӗҫе татах та вӑйлатрӗ.

Государствӑна тырӑ сутас ӗҫе пирӗн районри колхозниксем чӑнни пех те пысӑк ҫӗкленӳпе туса иртерчӗҫ. Кӗске вӑхӑт хушшинчех пирӗн районри колхозсем государствӑна 94 пин пӑт тырӑ сутрӗҫ. Ҫавӑн чухлӗ тырра декабрӗн 10-мӗшӗ тӗлне хатӗрлев пункчӗсене пӗтӗмӗшпех леҫсе пачӗҫ.

Мичурин ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗн членӗсем государствӑна 7.100 пӑт ытла тырӑ сутса, хатӗрлев пунктне хӑвӑрт турттарса пачӗҫ. Колхоз председателӗ Кондратьев юлташ государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне турттарас ӗҫе большевикла ертсе пычӗ. Ҫак ӗҫе вӗҫленӗ хыҫҫӑнах колхоз ытти колхозсене те тырӑ турттарма пулӑшрӗ.

Государствӑна тырӑ сутас ӗҫре Чаканарти „Париж Коммуни", Мӑн Сӗнтӗрти „Комбайн", Сыпайкассинчи „Красный пахарь" колхозсенчи колхозниксем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. „Комбайн" колхоз членӗсем государствӑна 4.270 пӑт, „Париж Коммуни" колхоз членӗсем 6.710 пӑт, „Красный пахарь" колхоз членӗсем 3.782 пӑт тырӑ сутрӗҫ, сутнӑ тырра государство склачӗсене пӗр тӑхтаса тӑмасӑр, хӑвӑрт леҫсе пачӗҫ.

Союзлӑ виҫӗ держава руководителӗсен конференцийӗ йышӑннӑ историллӗ решенисене колхозниксем пысӑк ырӑна хурса пахаларӗҫ. Колхозниксем Хӗрлӗ Ҫара ҫӗнӗрен активлӑн пулӑшма сӑмах пачӗҫ. Ҫакӑ вӑл чи малтан государствӑна сутнӑ тырра хӑвӑртрах турттарса парас ӗҫре курӑнчӗ. Юлашки икӗ-виҫӗ талӑк хушшинче пирӗн колхозсем хатӗрлев пунктне 19 пин пӑта яхӑн тырӑ турттарчӗҫ. Ҫапла район государствӑна сутнӑ тырра государство склачӗсене правительство кӑтартнӑ срокра пӗтӗмӗшпех леҫсе пачӗ.

Колхозсем умӗнче халӗ ҫуракине хатӗрленес тата чугун ҫул валли вутӑ хатӗрлес ответлӑ ӗҫсем тӑраҫҫӗ. Колхозсенчи коммунистсемпе партире тӑман большевиксен ҫак ответлӑ ӗҫсене вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек ертсе пымалла. Районри колхозсем чугун ҫул валли вутӑ хатӗрлес ӗҫре кая юлнине ҫывӑх кунсенчех пӗтермелле.

А. СОМОВ,
ВКП(б) Етӗрне райкомӗн секретарӗ.

Сутнӑ тырра—хатӗрлев пунктне

ОКТЯБРЬСКОЕ, декабӗн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи куна сутнӑ тырӑран 70 процентне хатӗрлев пунктне леҫрӗҫ. Хӗрлӗ Обозсен шучӗ кулленех ӳссе пырать. Декабрӗн 1-мӗшӗпе 5-мӗшӗ хушшинче кӑна 26.257 пӑт хатӗрлев пункчӗпе ялпо склачӗсене леҫнӗ. Районра чи малтан Урхас Кошка ялсоветӗнчи колхозсем государствӑна сутнӑ 7.000 пӑт тырра хатӗрлев пунктне леҫсе пачӗҫ. Туҫа тата Энтри-Пасар ялсовечӗсенчи колхозсем те сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫсе пӗтереҫҫӗ.

«Красный Октябрь», «Новая жизнь» тата Мижер ялсоветӗнчи колхозсем паян юлашки хут 20-шер лавпа хатӗрлев пунктне тырӑ леҫрӗҫ.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Пӗр кун хушшинче 4.544 пӑт тырӑ

ЕЛЧӖК, декабрӗн 10-мӗшӗ. (Телефонпа). Государствӑна тырӑ сутас ӗҫ районри колхозсенче вӑйлӑн сарӑлса пырать. Ӗнер, декабрӗн 9-мӗшӗнче, пирӗн районри колхозсем государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫме 227 лавпа кайрӗҫ. Ӗнер хатӗрлев пунктне пурӗ 4.350 пӑт тырӑ леҫнӗ.

Малта пыракан колхозсем государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пунктне леҫсе пӗтерчӗҫ. Крупская ячӗпе тӑракан колхоз государствӑна 2.666 пӑт, «Хунав» колхоз 5.350 пӑт, «Марс» колхоз 4.500 пӑт, Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 4.800 пӑт тырӑ сутса леҫсе пачӗҫ.

С. МАКАРОВ.

Государство валли тырӑ сутас ӗҫе активлӑн хутшӑннӑ тата государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пункчӗсемпе ялпо склачӗсене вӑхӑтра леҫсе панӑ ҫак колхозсемпе колхозниксене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

33. Улатӑр районӗнчи «Победа Октября» колхоз (колхоз председателӗ Додонов юлташ, пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Румянцев юлташ). Вӑл государствӑна 6.734 пӑт тырӑ сутса, хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ.

34. Улатӑр районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз (колхоз председателӗ Новиков юлташ, пуҫламӑш парторганизаци секретарӗ Леонов юлташ). Вӑл государствӑна 3.850 пӑт тырӑ сутса, хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ.

35. Ф. И. Иванов — Советски районри «Первое мая» колхозӑн колхозникӗ. Вӑл государствӑна 80 пӑт тырӑ сутнӑ.

36. А. Т. Тимофеев — Советски районри «Первое мая» колхозӑн кладовщикӗ. Вӑл государствӑна 88 пӑт тырӑ сутнӑ.

Антонов колхозник 50 пӑт леҫсе пачӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрӗн 11-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). „Шимар" колхоз членӗ Антонов юлташ, хӑй 66 ҫула ҫитнине пӑхмасӑр, ялхуҫалӑх ӗҫӗнче хастарлӑн ӗҫлет. Кӑҫал та вӑл темиҫе ҫӗр ӗҫкунӗ ӗҫлесе гурӗ, нумай тырпул туса илчӗ.

Нумаях пулмасть Антонов юлташ хӑйӗн государствӑна сутнӑ тыррине хатӗрлев пунктне тӑватӑ лавпа леҫрӗ.

— Йышӑнӑр манӑн тырра, юлташсем. Кунта 50 пӑт. Типӗ те таса тырӑ. Кайтӑр вӑл Хӗрлӗ Ҫарӑн куллен ӳссе пыракан хӑватне ӳстерме ҫӗре, — терӗ Антонов юлташ тырӑ йышӑнакансене.

Ҫавӑн пекех „Янмурзино" колхоз членӗ Ильин юлташ та государствӑна хӑйӗн хуҫалӑхӗнчен 35 пӑт тырӑ сутрӗ. Хӑех леҫсе пачӗ.

Районри чылай колхозсем государствӑна сутнӑ тырра хатӗрлев пункчӗсене леҫсе пӗтерчӗҫ. 138 пин пӑт сутма йышӑннӑ тырӑран паянхи куна государствӑн хатӗрлев пункчӗсене тата потребкооперации склачӗсене пурӗ 126 пин пӑт турттарса панӑ.

Суту-илӳ организацийӗсем государствӑна тырӑ сутнӑ колхозсемпе колхозниксене сутма икӗ миллион ҫурӑ тенкӗлӗх промтоварсем илсе килнӗ.

С. ШАДИН.

Колхозсем пӗр-пӗрне пулӑшаҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Паянхи куна 56 колхоз государствӑна сутнӑ тырра пӗтӗмӗшпех хатӗрлев пунктне леҫнӗ. Халӗ ҫав колхозсем кӳршӗри колхозсене пулӑшаҫҫӗ. Чурачӑк тата Ярапайкасси ялсоветӗнчи колхозсем Сыпайкасси ялсоветӗнчи колхозсен сутнӑ тыррине хатӗрлев пунктне леҫсе пачӗҫ.

Вускасси колхозӗнче ку тӗлӗшпе ятарласа тунӑ транспорт бригади ӗҫлет. Ана 60 ҫулхи И. Волков колхозник ертсе пырать.

В. ГУСЬКОВ.

Тавӑт ялсовечӗ юлса пырать

ЭЛӖК, декабрӗн 8-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Тавӑт ялсоветӗнчи тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлекен колхозниксем хӑйсен тыррипчен тата колхоз фондӗнчен 4.000 пӑт ытла сутма пулчӗҫ. Анчах ялсоветӗнчи колхозсен руководителӗсем ҫак тырра хӑвӑртрах хатӗрлев пунктне леҫсе парас тесе тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫавна пула паянхи куна ялсоветӗнчи 3 колхоз сутнӑ тырӑран 1.200 пӑтне ҫеҫ хатӗрлев пункчӗсене леҫнӗ. «Сталинит» колхоз (председателӗ Петров) 1.050 пӑтран 60 пӑтне ҫеҫ леҫнӗ. Колхоз активӗ государствӑна мӗнпурӗ те 50 пӑт ҫеҫ сутнӑ. Правлени членӗ Нестер Осипов (ферма заведующийӗ), Филипп Емельянов (колхоз председателӗ пулнӑскер) государствӑна пӗр килограмм та сутман.

«Комбайн» колхозра 2.082 пӑт тырӑ сутма йышӑннӑ. Паянхи куна хатӗрлев пунктне мӗн пурӗ те 454 пӑт ҫеҫ леҫнӗ. Колхоз председателӗ Иванов юлташ, ӗҫкӗ айне пулнӑскер, тырӑ леҫесси ҫинчен маннӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, виҫӗ кун хушши вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, декабрӗн 9-мӗшӗнче ЗНАМЕНКА хулипе чугун ҫул узелне тытса илнӗ.

Декабрӗн 10-мӗшӗнче КИРОВОГРАД енче пирӗн ҫарсем ГРИГОРЬЕВКА, ПЛЕШКОВО, ТОПИЛО, КОПАНИ, КУЧЕРОВКА, ХИРОВКА, КОНСТАНТИНОВКА, ВЛАДИМИР, ВЕРШИНА-КАМЕНКА, ПЕТРОВСКОЕ, ЧЕЧЕЛЕВКА ятлӑ ялсене тата ХИРОВКА, ЧАБАНОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене ҫапӑҫса тытса илнӗ.

МАЛИН хулинчен кӑнтӑртарахри районра пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен шултӑра вӑйӗсен атакисене ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухату тӳстернӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Декабрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 122 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ, вӗсенчен 92-шне Черняхов хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри районра пӗтерсе тӑкнӑ.

Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 14 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Украинӑри 2-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, виҫӗ кун хушши вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, Знаменка хулипе паха чугун ҫул узелне тытса илнӗ. Знаменка патне пымалли инҫетри вырӑнсенче нимӗҫсен оборонине ҫӗмӗрсе, пирӗн танкистсем тӑшманӑн тылне кӗрсе кайнӑ та унӑн ҫулӗсене татнӑ. Ҫав вӑхӑтрах совет ҫарӗсем нимӗҫсене фронт енчен татӑклӑн пырса ҫапнӑ. Нимӗҫсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑнӑ. Хула хӗррисенче тата урамсенче вӗсем танксене ҫӗре чава-чава лартнӑ, малтанах туса хунӑ укрепленисемпе усӑ курса, темиҫе хут та контратака тунӑ. Тӑшман персе тӑнине тата унӑн контратакисене ҫӗнтерсе, совет боецӗсем хулана вӑркӑнса кӗнӗ те тӑшмантан урам хыҫҫӑн урам тытса илсе пынӑ. Ӗнер каҫхине пирӗн ҫарсем Знаменка хулипе чугун ҫул узелне нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен пӗтӗмпех тасатнӑ. Знаменкӑшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче тӑшман пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, пирӗннисем декабрӗн 9-мӗшӗнче кӑна 1.500 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, нимӗҫсен 23 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшмантан тупӑсем, боеприпассем тата тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ. Чылай ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Кировоград енче пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ. Пӗр соединенин чаҫӗсем тӑшмана вирлӗн пырса ҫапнӑ та ӑна темиҫе ялтан хӑваласа кӑларнӑ. Малалла тапӑнса пырса, пирӗн боецсем Хировка ятлӑ паха чугун ҫул станцине тытса илнӗ. Нимӗҫсем ҫав станцирен пӗр йӗркесӗр каялла чакнӑ чухне 8 тупӑ тата боеприпассен складне пӑрахса хӑварнӑ. Пирӗннисем тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ темиҫе вунӑ автомашина тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн чаҫсем, ҫапӑҫса малалла куҫса пырса, нимӗҫ пехотин батальонне аркатса тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Малин хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем тӑшманӑн атакисене ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ. Пӗр соединени позицине паян тӑшман пехотин шултӑра вӑйӗсем тата 200 танк ытла атакӑланӑ. Совет артиллерисчӗсем тӑшмана вӑйлӑн пенӗ, ӑна пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Нимӗҫ танкӗсен пӗр пайӗ ҫапах та пирӗн ретсем витӗр татса кӗрсе кайма пултарнӑ. Засадӑра тӑнӑ совет танкисчӗсем ҫав танксен ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. Кун каҫиччен нимӗҫсен 65 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 14 тупине тата 40 бронетранспортерне ҫити ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Тӑшман пехотине пӗр полка ҫити сапаласа янӑ е пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра танксене перекен артиллерипе бронебойщиксем нимӗҫсен 27 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Витебск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ нимӗҫсен фронталла каякан темиҫе ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушенисене пула 90 вагонпа платформа таран ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Кунсӑр пуҫне, партизансем шоссе ҫулӗ ҫинче 5 автомашинӑна персе сиенленӗ, пӗр кӗпере сирпӗнтерсе янӑ тата телефонпа телеграф ҫыхӑнӑвне пӑснӑ.

* * *

Нимӗҫсен 113-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 261-мӗш полкӑн 3-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Франц Каминский ҫапла каласа панӑ: «Ҫара мана пӗлтӗр ҫулталӑк пӗтеспе илчӗҫ. Малтан эпӗ Вильно хулинче, 217-мӗш полкра тӑтӑм, унтан мана Фран-
пире тӑракан запасри полка ячӗҫ. Ҫав полкӑн подразделенийӗсенче поляксем питӗ нумайччӗ. Сӑмахран, 1-мӗш ротӑра 70 полякчӗ, 50 нимӗҫ ҫеҫчӗ. Август уйӑхӗнче полк командованийӗ нимӗҫсен пысӑк ушкӑнне Российӑна яма уйӑрса хучӗ. Поляксенчен пуринчен те нимӗҫ хӗҫпӑшалне, унтан ҫар хатӗрӗсене те туртса илчӗҫ те фронта каякансене пачӗҫ. Пире ун вырӑнне поляксемпе французсен хӗҫпӑшалӗсене тата кивелнӗ ҫар хатӗрӗсем пачӗҫ. Сентябрь уйӑхӗнче мана ятарласа тунӑ маршевӑй батальона ячӗҫ. Эпӗ вара Хӗвелтухӑҫӗнчи фронта 113-мӗш пехотнӑй дивизие лекрӗм. Ҫав дивизи унччен Францире тӑнӑ, ҫак ҫулхи июль уйӑхӗнче ӑна Российӑна янӑ. Темиҫе уйӑх хушши ҫапӑҫса, дивизи питӗ пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ. Фронтра эпӗ икӗ эрне пурӑнтӑм. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн ротӑран ҫурри вилсе е аманса пӗтрӗ».

* * *

Киев облаҫӗнчи Летпи ялӗнчи ҫынсем нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем тискер ӗҫсем туни ҫинчен акт ҫырнӑ. Актра ҫапла каланӑ: «Нимӗҫ захватчикӗсем пирӗн ялсене тустарса пӗтерчӗҫ, мирлӗ граждансене нумайӑшне вӗлерчӗҫ. Гитлерла пуҫкасакансем ял варринче ҫакса вӗлермелли турӗҫ те пӗр айӑпсӑр ҫынсене—А. Зуба, К. Ильченкона, П. Слипкӑна тата ыттисене те ҫакса вӗлерчӗҫ. Пирӗн ялтан тухса кайнӑ чухне нимӗҫсем яла вут тивертекен команда хӑварчӗҫ. Ҫав фашистла ирсӗрсем вара пурӑнакан 900 киле яхӑн, ҫӗнӗ шкула тата обществӑллӑ ытти ҫуртсене ҫунтарса ячӗҫ».

Акт ҫине Летпи ялӗнчи ҫынсем Шевченко, Друсь, Петребаги тата ыттисем те алӑ пуснӑ.

Сталинла премисен комитечӗсенче

Наукӑпа изобретательство ӗҫӗсемшӗн паракан Сталинла премисен комитечӗ тата Литературӑпа искусство ӗҫӗсемшӗн паракан Сталинла премисен комитечӗ Сталинла премисем илме тивӗҫлӗ кандидатсене палӑртма пуҫланӑ.

Кӑҫал Сталинла премисене наукӑллӑ ҫав тери паха ӗҫсемшӗн, изобретенисемшӗн, производство ӗҫӗсен меслечӗсене тӗпренех улӑштарса лайӑхлатнӑшӑн тата литературӑпа искусствӑн ҫав тери паха произведенийӗсемшӗн—1943-мӗш ҫулта туса е ҫырса пӗтернисемшӗн, ҫавӑн пекех тата 1942-мӗш ҫулхи октябрӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа 1943-мӗш ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен туса е ҫырса пӗтернисемшӗн параҫҫӗ.

Сталинла премисем пама сӗннине наукӑллӑ ӗҫсемпе пӗрле е изобретенисем ҫинчен тата ӗҫ меслечӗсене лайӑхлатни ҫинчен ҫырса кӑтартнисемпе пӗрле, ҫавӑн пекех тата литературӑпа искусство произведенийӗсемпе пӗрле 1944-мӗш ҫулхи январӗн 15-мӗшӗччен ямалла. Наукӑпа изобретательство ӗҫӗсемшӗн паракан Сталинла премисен комитетне ҫак адреспа ямалла: Мускав хули, Рождественка, 11; Литературӑпа искусство произведенийӗсемшӗн паракан Сталинла премисен комитетне ҫак адреспа ямалла: Мускав хули, Художествӑллӑ театрӑн проезчӗ, 3. (ТАСС).

Совет Союзӗн Канадӑри миссине тата Канадӑн Совет Союзӗнчи миссине посольствӑсем туса хуни тата Совет Союзӗпе Канадӑн дипломатиллӗ представителӗсене посолсем туса хуни

Совет Союзӗн правительствипе Канада правительстви пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх, Совет Союзӗн Канада правительстви ҫумӗнчи дипломатиллӗ представительствине тата Канадӑн СССР правительстви ҫумӗнчи дипломатиллӗ представительствине миссисенчен посольствӑсем туса хунӑ.

Совет Союзӗпе Канадӑн посланникӗсене посолсем туса хунӑ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Ӳкерчĕк çинче: тупă наводчикĕ кĕçĕн сержант Г. Я. Скворцов комсомолец. Вăл Елчĕк районĕнчи «Правда» ячĕпе тăракан колхозран. Ăна командовани «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

П. МЕЛЕНТЬЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ШУПАШКАР ÇАМРĂКĔ КОРМИЛИЦЫН

Ященко старши лейтенантăн подразделенийĕнче эпир, чăвашсем, иккĕччĕ. Походра та, çапăçура та яланах пĕрле. Унăн ячĕ—Сергей, хушамачĕ—Кормилицын. Хăй — Шупашкартан. Çапăçма кĕрес умĕн яланах çапла калатчĕ вăл: «Нимĕç фашисчĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкăпăр. Герой ятне илсе, чăвашсен тĕп хулине—Шупашкара таврăнпăр. Унта пире кашниех: «Сывă-и, пире хӳтĕленĕ çамрăк геройсем»,—тесе хавассăн кĕтсе илĕç», тетчĕ.

Пирĕн рота малалла куçрĕ. Çул çинче чухне тăшман снарячĕ пирĕн пĕр минометпа миномет расчетне стройран кăларчĕ. Комсомолец Сергей Григорьевич Кормилицын çĕмĕрĕлнĕ миномета илчĕ те ăна çавăнтах юсарĕ, вăра манăн пата сăнаса выртмалли пункта пычĕ.

— Миномет çапăçăва хатĕр. Пеме ирĕк парăр,—тесе ыйтрĕ.

— Эсир огневой позицие юсарăр-и?—ыйтатăп.

— Юсарăмăр, лайăх маскировка турăмăр. Тăшман 20 метра çывхарсан та пире асăрхайрас çук,—терĕ.

Çав кун нимĕç батальонĕ пире темиçе хут та атакăларĕ. Анчах хăюллă та паттăр чăваш ачи Кормилицын, вĕсене минометпа çил-тăвăллăн пере-пере каялла чакарчĕ.

Фашистсем тарăхса çитрĕç. Вĕсем куракçĕ: чăваш çамрăкĕ çирĕп тăрать, пĕр шит те каялла чакмасть. Ирсĕр нимĕçсем Героя çавăрса илме шутлаççĕ. Вĕсем хăйсен батальонĕ çумне ӳсĕр салтаксен тепĕр ротине хушаççĕ. Еçсе анкă-минкĕленнĕ нимĕçсен ӳсĕр салтакĕсем пире пĕр пĕшкĕнмесĕрех атакăлама пуçларĕç.

Комсомолец Кормилицын нимĕçсене «хурçă кучченеç» пама тытăнчĕ. Йĕри-тавра вутлă çумăр çăвать. Анчах Хĕрлĕ Çар воинĕсемшĕн çакă вăл нимех те мар.

Хĕрӳллĕн çапăçнă вăхăтра пире хыçалтан нимĕçсен взвочĕ çавăрса илнĕ иккен. Фашистсем пирĕнтен пĕр 50—60 метрта кăна. Мина турттарса пымалли çула татнă. Пирĕн пĕтĕмпе те виçĕ мина кăна юлнă. Нимĕç взвочĕ çывăхарнăçемĕн çывăхарса пырать. Расчет командирĕ стройран тухрĕ, Кормилицын çавăнтах унăн вырăнне йышăнчĕ. Кĕçех пирĕн станковăй пулемет та, ручной пулемет та ĕçлеме пăрахрĕç. Çак вăхăтра Сережăна ураран амантрĕç. Апла пулин те, Кормилицын тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешекен совет воинĕсене хавхалантарса пычĕ. Нимĕçсен взводран пĕр отделени кăна тăрса юлчĕ. Анчах çаплах хаяр çапăçу пырать-ха. Эпĕ выртакан окоп умĕнчех тăшман снарячĕ çурăлчĕ. Мана икĕ çĕртен çăмăл амантрĕç. Икĕ юлташ стройран тухрĕç.

Çак вăхăтра Кормилицын нимĕç салтакĕсем çине виçĕ мина умлăн хыçлăн вăркăнтарчĕ те станковăй пулемет патне хăвăрттăн шуса кайрĕ. Эпĕ ручной пулемет патне шăватăп. Суран ыратнине те туймастăп.

Манăн юлташ Сережа Кормилицын çав çапăçура виçĕ çĕртен аманчĕ. Аманнă пулин те, вăл тăнĕ çухаличченех тăшман çине пулеметран тăхлан çумăр çутарса тăчĕ. Анчах тăваттăмĕш хут амансан, манăн чи çывăх юлташăм ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ. Эпĕ тӳссе тăраймарăм, юлташа вĕлернĕ ирсĕрсем çине ытти юлташсене ертсе кайрăм.

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем, çак çамрăк геройăн сăнарĕ сирĕншĕн пуриншĕн те пример пулса тăтăр. Эсир ĕçре хăвăрăн паттăрлăхăра кăтартăр, хĕрӳ ĕçпе фронтовиксене пулăшса тăрăр.

Старши сержант И. ПАТМАР.

01165-мĕш полевая почта, «М» литер.

Стихсем ШАВЛЫ

Мускав
(О д а)

Чугун кĕлеллĕ атăпа
Кунта кĕреслĕнччĕ тиран.
Каппайчăк, йĕрĕнчĕк шапа!
Вăл шутламан айван пуçпа, —
Мускав нихăçан та парăнман.

Хура йышпа шуса тухса,
Вăл хĕрĕхпĕрремĕш хĕле
Тăхлан сапса, кăвар тăкса,
Халăхсене пуççаптарса
Кĕресшĕн пулчĕ Кремĕле!

Мухтавлă тĕп хула,— Мускав!
Эс хăрамарăн палачран,
Эс тухрăн сулăмлăн, васкав
Йыхравлăн вĕлкĕшрĕ ялав,
Хӳме çĕклерĕн хурçăран.

Октябрьпе ноябĕре
Тӳссе ирттертĕн те, юта
Эс çапрăм çавăрса çĕре,
Эс хаплаттартăн та тепре
Йăванчĕ анчăк аната.

Чакать, чакать халь супостат,
Кышлать вăл Днепр çыранне,
Анчах та шывĕ ăшалать,
Кăпăкланать, тапать, туртать,
Фрица çăтать вăл аварне.

Аманнă кашкăр пит усал,
Хăйрать вăл хуçăк асавне,
Асăрхаймарăн, мăй пулсан,
Пĕрре çапсассăн кăнтмасан,
Сикет хаяррăн сан çине.

Халь урнă нимĕç те çавах:
Сикет, туллать, улать, кышлать:
Асаймăн урăх, вăрхурах,
Кĕтет, сан вилĕмӳ пурах,
Эсрел ӳтӳшĕн шăл шаккать.

Хуласене ютран çăлса
Мала васкать, ав, Хĕрлĕ Çар,
Хире фриц виллине акса,
Çĕршыв питне юнпа çуса,
Васкать, васкать, чи харсăр çар.

Патвăррăн тапрĕç чĕресем,
Çĕршыв-çке тасалать муртан,
Çиçеç Украйнă çыннисем,
Хавас кулаç белоруссем,
Латыш тухап тет тамăкран.

Мускав енне, Мускав енне
Пур ĕмĕт-шанчăк ăсанать,
Мускав—атте, Мускав—анне,
Хӳтĕлет вăл ывăлне-хĕрне,
Унта-çке Сталин пурăнать.

Мускав енне, Мускав енне
Пур çулнĕр анлăн тăсăлать,
Тĕнче итлет Мускав сасне,
Тĕнче пĕлет Мускав вăйне,
Унта-çке Ленин çывăрать.

Мускав—тăван çĕршыв чĕри,
Вăл ăшăтать, вăл ăс парать,
Вăл çăлтăрсен çут çăлтăрри,
Вăл чаплă юрăсен юрри,
Вăл ĕç тĕрри, гранит, хăват!

Мускав тесен—чун çĕкленет,
Мускав тесен—паттăрланан.
Итле, каç-каç пĕр шав килет:
Вунккĕ залп хаяр кĕрлет
Çĕр çирĕм тăватă тупăран.

Мускав тесен—тăшман чĕтрет,
Мускав тесен—тарать тăшман.
Итле каç-каç мăн шав килет:
Пĕр харăс çирĕм залп кĕрлет
Шăп икçĕр çирĕм тватă тупăран.

Мускав салют парать, салют,
Çĕнми çарне вăл саламлать,
Вăл пехиллет: «Васкавлăн ут.
Ан астăр чăрсăр çичĕ ют,
Аркат, тăван çĕре тасат!»

Çулпуç пырать çул кăтартса.
Çĕнтерĕпĕр! Вара, çĕнсен,
Пин тупăран салют парса,
Авалхилле пин чан çапса
Уяв уявлĕç халăхсем.

Эс вилĕмсĕр, Мускав, Мускав!
Нихçан та пулмăн ют хурри,
Эс — çĕнтерӳ, шурми ялав,
Эс—ирĕклĕх, вĕри йыхрав,
Эс — тĕреслĕх, çĕршыв чĕри!

«Мухтав та тав!» — хĕпĕртесе
Çĕкленчĕ сас чĕресенчен.
Телей шевли тăкса, çиçсе,
Сӳнмесĕр çунччăр çăлтăрсем
Сан çӳллĕ башнюсем çинче.

ВĂРЛĂХ ТАСАТАÇÇĔ, ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕМ ЮСАÇÇĔ

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттарас, юр тытса хăварас тата вăрлăх тасатас, тĕлĕшпе пуçланнă уйăхлăха хутшăнса, чылай колхозсем ку ĕçсене пысăк хăвăртлăхпа туса пыма тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне вăрлăх фончĕсене пур колхозсенче те тенĕ пекех туса çитерне.

«Коммунар» колхозăн çитес çуракинче 171 гектар çурхи тырăсем акмалла. Вăрлăх çителĕклĕ, колхозниксем халĕ вăрлăха тĕплĕн сортласа тасатаççĕ.

Колхоз ку таринччен уя 600 лав ытла тислĕк кăларчĕ. Ялхуçалăх инвентарьне юсас тĕлĕшпе тимĕрçĕ И. Павлов юлташ тăрăшса ĕçлет. Нумаях пулмасть вăл триер юсаса пĕтерчĕ. Çавăн хыççăн вара вăл ытти машинăсене те юсама тытăнчĕ. 17 плугран 12-шĕ халĕ ĕçе тухма хатĕр.

Ходяковăри «Новый путь», Патаккассинчи «Броневик», Сормпуç Мушкассинчи «Красное знамя» колхозсенче те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе васкавлă ĕçсем тăваççĕ. «Броневик» колхоэра 530 пăт çĕлĕ, 60 пăт ытла тулă сортланă.

Хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ

«Гигант» колхоз—Вăрнар районĕнчи пысăк колхозсенчен пĕри. Унта 6 бригада. Çитес çуракинче унăн 415 гектар тырă акмалла. Çак пысăк ĕçе тума тĕплĕн хатĕрленес тесе, колхозниксем халь кĕрешӳве тухрĕç. Темиçе çĕр центнер тырра сортласа тасатнă та ĕнтĕ, ыран-виçмине алăпа пăрçа суйлама тытăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах колхоз агрономĕ Никифорова юлташ тăрăшса ĕçлет.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те хăвăртланчĕ. Юлашки вăхăтра 12 плуг юсанă, çĕнĕрен аллă сӳре тунă, сеялкăсем те (пĕтĕмпе 5) уя тухма хатĕр. Çапла вара колхозăн тата 18 плуг çеç юсамалла, ытти ялхуçалăх инвентарĕсем унăн уя тухма хатĕр.

Колхозра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Кашни бригадăпа звено тата уйрăм колхозник ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешет. Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ П. Волков ертсе пыракан 4-мĕш бригада, акă паянхи куна 10 сӳре, 1 сеялка, 4 плуг юсаса лайăх вырнаçтарса лартнă, пĕтĕм инвентарьсенчен те унăн тата 2 плуг çеç юсамалла, вăрлăхсене пĕтĕмпех сортланă, вĕсем тĕплĕ ампарсенче шанчăклăн выртаççĕ.

«Гигант» колхоз членĕсем, çĕнтерӳ сехетне çывхартас тесе, фронта пур енĕпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Вĕсем, вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттарас, юр тытса хăварас тата вăрлăхсене çуракине хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе пыракан уйăхлăха хутшăнса, хăйсем умне çĕнĕ сулччен çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитес задача лартнă.

Х. ЛИСИН.

ВĂРНАР. (Хамăр корр).

Украинăри комсомол Донбаса шефа илнĕ

Украинăри комсомолăн Центральный Комитечĕ комсомол организацийĕсене Донбасри çĕркăмрăк промышленноçне çĕнĕрен ура çине тăратас ĕçе хутшăнтарма йышăннă.

Сталино, Ворошиловград, Киев, Запорожье, Черниговз, Полтава тата Сумы облаçĕсенчи комсомол организацийĕсем 94 шахтăна шефа илнĕ. Вĕсем Донбаса ĕçлеме 40.000 çын яраççĕ. Комсомолецсем хăйсен предприятийĕсенче усă курман инструментсем, оборудовани тата строительство материалĕсем шыраса тупаççĕ, Донбасри предприятисем валли тумалли япаласене срокчен туса пама тăрăшаççĕ.

Донбасри çамрăк рабочисене лайăхрах тăрантармашкăн Украинăри комсомолăн Центральный Комитечĕ комсомол организацийĕсене çĕнĕрен 7.000 гектар пахча-çимĕçсем лартса ӳстерме тата Донбасри çĕркăмрăк предприятийĕсен подсобнăй хуçалăхĕсем валли 11.300 центнер пахча-çимĕç вăрлăхĕсем пухма хушнă.

Донбаса лектор ушкăнĕсем, концерт бригадисем, библиотекăсем, музыка инструменчĕсем тата кĕнекесем нумай яраççĕ. (ТАСС).

Харькова — çутăпа шыв

Харькова оккупантсенчен ирĕке кăларнă хыççăн вăл энергопоезд паракан электричествăпа усă курнă. Ноябрĕн 29-мĕшĕнче 1-мĕш вăйлă турбогенератор ĕçлеме пуçланă, хулана электричество токĕ пама тытăннă.

Электростанци ĕçлеме тытăннине пула, хулана халь шыв ытларах пама май пур, хулари канализаци системи йĕркеллĕн ĕçлеме тытăнать. 1-мĕш мунча тата фабрика-прачечнăй ĕçлеме тытăннă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ВОЕНРУКСЕМ ТĂРĂШНИПЕ

Куславкка районĕнчи Варасăрти туллимар вăтам шкулта вăрçă ĕçне вĕренме уйрăм пӳлĕм тунă. Унта инструкциллĕ плакатсем, пăшалсемпе гранатăсем тата ытти вăрçă хатĕрĕсен макечĕсем пур. Вĕсене пурне те, шкулти военрук Иванов юлташ ертсе пынипе, вĕренекенсем хăйсемех тунă.

ТРАКТОРИСТСЕН КУРСĔ

Куславкка МТС-ĕ çумĕнче трактористсен курсне уçнă. Унта 60 çын вĕренет. Вĕренекенсем Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладне сӳтсе-явнă хыççăн отлично вĕренме сăмах пачĕç.

Ӳкерчĕк çинче: Чкаловски районри „Красный Октябрь" колхозăн утарĕнче хурт пăхакан С. Б. Булатов. Вăл лайăх ĕçлесе, пыл нумай туса илнĕ.

Н. Данилов фотоӳкерчĕкĕ.

МОПР ЧЛЕНĔСЕН ПУЛĂШĂВĔ

Пирĕн республикăри МОПР членĕсем нимĕç захватчикĕсенчен сиен курнă Харьков облаçĕсенчи çынсене пулăшма 150 пин тенкĕ укçа пухса янă. Çак кунсенче Харьковри „Свет шахтера" заводри рабочисем Чăваш АССР МОПР Обкомĕ ячĕпе çак пархатарлă ĕçшĕн тав туса çыру янă.

ТИМУРОВЕЦСЕН КОМАНДИ

Комсомольски районри Ассанкассинчи туллимар вăтам шкулта тимуровецсен командине организациленĕ. Командăра тăракан пионерсем фронтовиксен çемьисене вутă татса парса тата хуçалăхри ытти ĕçсене туса пулăшаççĕ. Ку таранччен 12 çемьене пулăшнă ĕнтĕ.

□ **СЫВЛĂШРАН ТАПĂНАСРАН СЫХЛАНМА.** Осоавиахимăн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи организацийĕсем ĕççыннисене сывлăшран тапăнасран вĕрентес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Ку таранччен районра пурăнакан ĕççыннисен хисепĕнчен 93 процентне ПВХО кружокĕсенче вĕрентсе кăларнă. Кружоксенче вĕреннисем противогазпа усă курма, вут чĕртекен бомбăсене сӳнтерме, суранланнисене малтанласа пулăшу пама пĕлеççĕ.

□ **ÇĔНĔ РАДИОУЗЕЛ.** Комсомольски район центрĕнче çĕнĕрен радиоузел ĕçлеме тытăнчĕ. Малтанхи вăхăтлăха предприятисемпе учрежденисене 20 çĕре радио кĕртнĕ.

□ **ЛАША ВĂЙĔПЕ ĔÇЛЕКЕН АРМАН.** Элĕк районĕнчи „Пĕрлешӳ" колхоз лаша вăйĕпе ĕçлекен арман лартнă. Икĕ лашапа ĕçлекен арман талăкра 30—40 пăт тырă авăртса кăларма пултарать.

□ **ЙĔЛТĔРПЕ ÇӲРЕМЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ.** Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнче йĕлтĕрпе çӳреме вĕренмелли кружокра 25 студент тăрать. Занятисем йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Халĕ кружок Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа кросс ирттерме хатĕрленет.

□ **РАБОЧИСЕН ВĔРЕНĔВĔ.** Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра кăçал пĕтĕм рабочисенчен çурри ытла техника кружокĕсенчен вĕренсе тухнă. Хальхи вăхăтра заводри техникумра 150 çын, вăтам шкулта 221 çамрăк вĕренеççĕ.

□ **ÇИЛ АРМАНĔСЕМ ЮСАКАН МАСТЕР.** Çапла чĕнеççĕ Илья Семенова ял çыннисем. Вăл Шăхасан районĕнчи Матшӳ ялĕнчен. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа колхозсен 25 çил арманне юсанă. Илья Семенов районра кăна мар, ытти районсенче те пулать. Иртнĕ уйăхра вăл Куславкка районĕнче виçĕ арман юсанă.

Республикăри предприятисенче

Çулталăкри плана тултарнă хыççăн

ÇĔМЕРЛЕ. «Лесоруб» артель коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри плана Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарма пулнăччĕ. Вăл хăйĕн сăмахне срокчен пурнăçа кĕртрĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе 108 процент тултарнă. Куллен кирлĕ таварсем 109.000 тенкĕлĕх кăларас вырăнне 155.800 тенкĕлĕх туса кăларнă.

Артель членĕсем виçĕ державăн руководителĕсен конференцийĕ йышăннă декларацисене тулли кăмăлпа ырлаççĕ. Вăл декларацисем çĕнтерӳ çывăххине пĕлтереççĕ. Çĕнтерĕве çывхартма пулăшас тесе, артель коллективĕ çулталăк вĕçлениччен планран ирттерсе 76.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларма сăмах пачĕ. Вăл хăйĕн сăмахне халь ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

К. ДМИТРИЕВ.

Задание икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарма пулаççĕ

КАНАШ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Инвалидсен «Красный воин» артелĕн коллективĕ, виçĕ хăватлă держава конференцийĕн историллĕ решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн, çĕнĕ çулччен планран ирттерсе 50 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма пулчĕ. Виçĕ державăн Тегеранри конференцийĕ йышăннă Декларацие артельри рабочисемпе работницăсем пĕтĕм чун-чĕререн ырлаççĕ.

— Çĕнтерӳ вăхăчĕ инçе юлмарĕ, çак виçĕ державăн историллĕ решенийĕсем çĕнтерӳ кунне çывхартма май параççĕ. Эпир те çĕршывпа фронт умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлăпăр,— теççĕ вĕсем.

Çĕвĕ çĕлекен тата атă-пушмаксем юсакан мастерскойри рабочисем декабрь уйăхĕнчи задание икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарма пулчĕç.

Е. ТРОФИМОВА,
Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ.

Шупашкарти эрех заводĕнче

Шупашкарти эрех заводĕнче виçĕ аслă державăн руководителĕсен Тегеранра пулса иртнĕ конференцийĕ йышăннă декларацисене сӳтсе-явас майпа митинг пулса иртрĕ. Митинга пухăннă рабочисемпе работницăсем союзлă виçĕ державăн руководителĕсем ирсĕр тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас тĕлĕшпе пурте пĕр шухăшлă пулнишĕн чĕререн савăнаççĕ.

— Аслă çулпуç вăрçăн малтанхи кунĕсенчех каланă сăмахсем пурте пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрçăн юлашки тапхăрĕ пырать. Çак виçĕ державăн историллĕ решенийĕ çĕнтерӳ инçе юлманнине тепĕр хут çирĕплетсе парать,—тет завод директорĕ Руденко юлташ.

Завод коллективĕ çак историллĕ решенисене сӳтсе-явнă хыççăн декабрь уйăхĕнчи ĕç планне 200 процента çити тултарма пулчĕ. Разливной цех коллективĕ (начальникĕ Пегаева юлташ) ку уйăхри задание 100 процента яхăн пурнăçланă та ĕнтĕ. Вортникова, Филиппова, Калашникова стахановкăсем куллен задание 200—250 процент тултараççĕ.

Халĕ пур цехсенче те ытларах продукци туса кăларас тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту çĕнĕрен сарăлса пырать.

Ф. М-н.

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли 1943-мĕш çулхи иккĕмĕш çур çулти плана декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнле тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	108,0	81,0	1	6
Сĕнтĕрвăрри	101,4	95,9	2	1
Канаш	99,4	84,8	3	4
Шăхасан	90,8	86,9	4	2
Ишлей	90,3	58,3	5	14
Вăрнар	81,7	69,0	6	10
Первомайски	80,8	85,0	7	3
Елчĕк	60,2	54,1	8	17
Вăрмар	79,6	81,7	9	5
Улатăр	75,8	79,6	10	7
Сĕнтĕр	74,0	49,0	11	21
Шупашкар	73,7	59,3	12	13
Калинино	72,0	67,4	13	11
Çĕрпӳ	71,5	75,1	14	8
Куславкка	67,7	53,2	15	18
Етĕрне	67,4	52,6	16	19
Советски	65,0	48,0	17	23
Комсомольски	64,3	46,0	18	24
Элĕк	63,9	50,2	19	20
Çĕмĕрле	60,1	49,0	20	22
Красноармейски	52,6	54,3	21	16
Пăрачкав	50,0	54,9	22	15
Шăмăршă	49,6	60,5	23	12
Октябрьски	48,8	38,5	24	26
Тăвай	43,4	73,9	25	9
Хĕрлĕ Чутай	40,4	40,6	26	25
Чкаловски	40,0	37,0	27	27
Кувакино	7,5	35,9	28	28

Ют çĕршывсенче

Англи хаçачĕсем союзлă виçĕ держава руководителĕсен Тегеранри конференцийĕ çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçат хăйĕн редакци çырнă статьинче Тегеранри конференци çинчен çапла калать: «Халиччен союзниксем пĕр ĕçшĕн кĕрешнĕ, анчах та вĕсем пĕр вăй пек пулса кĕрешмен. Вĕсем пĕрпĕринпе çыхăнса ĕçлемен... Çакă вăл начар ен пулнă, вăл малашне союзниксемшĕн питĕ хăрушă пулса тăма пултарнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕн Мускавра октябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ конференцийĕ Гитлерăн шанчăкĕсем çирĕп маррине кăтартса пачĕ. Çав конференцире пула виçĕ государство вăрçă тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕрне лайăх ăнланчĕç, куçеç те мар, çав конференци вăл вăрçăн политикăллă ыйтăвĕсене пăхса тăмалли яланхи аппарат туса хучĕ. Халĕ государствăсен виçĕ пуçлăхĕ пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç, хăйсем тĕл пулса калаçни çинчен 340 сăмахпа каласа парса, вĕсем халĕ нимĕн те çитменни çуккине кăтартса пачĕç. Халĕ ĕнтĕ иккĕмĕш фронт пирки е ытти фронт пирки тĕрлĕ шухăшлани çук. Пĕрлешӳллĕ стратеги пурнăçа кĕчĕ».

Канада хаçачĕсем Тегеранри конференци çинчен

ОТТАВА, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзлă виçĕ державăн декларацийĕсене Канадăри пур хаçатсем те курăнмалла вырăнта пичетленĕ. Тегеранри конференци çинчен тĕплĕ çырнă статьясемсĕр пуçне, хаçатсем çав конференци çинчен темиçешер фотографи пичетлесе кăларнă. Хаçатсем пурте çав конференци историре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен çыраççĕ, çав конференци вăл вăрçă вăрçас тĕлĕшпе те, мир тăвас тĕлĕшпе те союзниксем пурте пĕр шухăшлă пулнине кăтартрĕ, тĕнĕл держависем союзлă аслă державăсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яма шутланисене çапса çĕмĕрчĕ, теççĕ. Статьясенче конференцин вăрçă тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсен пĕлтерĕшне палăртаççĕ. Хаçатсем союзлă çĕршывсен пуçлăхĕсем Турци руководителĕсемпе тĕл пулса калаçнине те палăртаççĕ.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА ШЫВ АЙĔНЧИ ВĂРÇĂ НОЯБРЬ УЙĂХĔНЧЕ МĔНЛЕ ПЫНИ ÇИНЧЕН ПĔРЛЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, шыв айĕнчи вăрçă ноябрь уйăхĕнче мĕнле пыни çинчен Рузвельтпа Черчилль пĕрле çырса пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

«Ноябрь уйăхĕнче подводнăй лодкăсене хирĕç тунă операцисем çакăнпа паллă пулса тăраççĕ, — тенĕ пĕлтерӳре:—тăшман тем пек тăрăшсан та, вăл пĕчĕк çитĕнӳсем çеç тума пултарнă. Тăшманăн подводнăй лодкисем ноябрь уйăхĕнче путарнă суту-илӳ суднисен хисепĕ ытти уйăхсенче путарнă суднăсен хисепĕнчен сахалтарах. Азор утравĕсем çинче вырнаçнă самолетсемпе усă курса, эпир хамăр суднăсен караванĕсене хуралласа пырас ĕçе лайăхлатрăмăр, тăшманăн подводнăй лодкисене пирĕн вăйсем атакăлама пултарайман районăн пысăкĕшне чакартăмăр».

«Ноябрь уйăхĕнче тăшманăн подводнăй лодкисене вĕсем хăйсем путарнă суднăсенчен ытларах путарнă»,—тенĕ декларацире.

США-РА 1943-МĔШ ÇУЛТА ÇАР ХАТĔРĔСЕМ ТУНИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар хатĕрĕсем тăвас ĕç управленин вице-председателĕ Нельсон çапла каланă: кăçал çар хатĕрĕсем пĕлтĕрхинчен пĕр 50 процент ытларах туса кăларатпăр. Хĕçпăшалсем туса кăларасси пĕлтĕрхинчен 85 процент ӳсет. 1944-мĕш çулта çар промышленноçĕн продукцийĕ кăçалхи продукцирен 20 процент ытларах пулать, тенĕ.

ГЕРМАНИРЕ ПĂХАР ЯПАЛАСЕНЕ КОНФИСКАЦИЛЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен «Дер нейе таг» ятлă фашистла хаçачĕ çапла пĕлтерет: Германи влаçĕсем пăхăр хурансене, вĕсен ывăсĕсене, пăхăр хутăштарса тунă япаласене тата пăхăрланă япаласене халех конфискацилеме хушнă. Çĕнĕ япаласене те, усă курнисене те конфискацилемелле.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче союзниксен çарĕсем ĕнер Çĕнĕ Гвинейăри Варео хулине тытса илнĕ, японецсене çурçĕрелле хăваласа пыраççĕ.

Çав кунах Лăпкă океанри флотăн хăватлă соединенийĕсем Науру утравне атакăланă, ун çине сывлăшран бомбăсем пăрахнă тата тинĕсрен пенĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, декабрĕн 12-мĕшĕнче, юлашки кун сасă илемлĕ

„ЗОЛОТОЕ ОЗЕРО"

ятлă фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ. 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Декабрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасă илемлĕ

„М Е Ч Т А"

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Кашни вырсарникун, юнкун, шăматкун

Т А Ш Ă

Джаз-оркестр вылять. Пуçламĕшĕ 23 сехетре. Билетсем 25 тенкĕ тăраççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 1169 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.